# Хутлă канфет

Пĕчĕк Жанна юр ирĕле пуçланă-пуçламан кивĕ кăвак пальтине хывса пăрахрĕ те çарамасах çӳре пуçларĕ. Таçта аякка кайса çӳремест вăл, пысăк алăка уçкаласа урама тухать те тӳрех кӳршĕри Наçтаççи мамак патне чупать, сивĕ ачисем курса та юлаймаççĕ ăна. Наçтаççи мамак ялан хура тăхăнса çӳрекен пĕркеленчĕк ватă карчăк. Жанна кукамĕнчен те ватăрах, хăй çапах та кашни каç тенĕ пекех куçлăх тăхăнать те, чӳрече çывăхнерех вырнаçса ларса, хаçат вулать.

Акă халĕ те, Жанна пырса кĕнĕ чухне, аллинче унăн пысăк хаçатчĕ, пĕчĕкреххи айккинче, пукан çинче выртать. Настаççи мамакăн хăлхи илтменпе пĕрех, хальхинче тс алăк уçăлса хупăннине илтмерĕ пулас вăл, çаплипех хаçат ăшнелле путса ларать.

Жанна аттисене хыврĕ те мамак çумне пырса сĕртĕнчĕ, мамак ăна ачашла пуçларĕ, хаçатне юнашар пукан çине, пĕчĕк хаçачĕ çумне хучĕ, ку

çлăхне хывса пĕрене çинчи пăтаран çакса ячĕ.

— Сивĕ-и тулта? Ăшăтать ĕнтĕ, часах çерем тухать, курăк шăтма тытăнать, вара пулчĕ те ĕнтĕ, çулла çитет, — чӳречерен пăхса калаçрĕ Наçтаççи мамак. — Çарамас ан çӳре тесе миçе каламалла, ара, сана, шăнсан, кайран пуç ыратать вĕт. Аттуна та шыв кĕнĕ пуль-ха каллех. — Наçтаçç мамак Жаннăн аттисене тытса пăхрĕ, унтан кăмака çине вырнаçтарса лартрĕ. — Паян иртерех хутнăччĕ те, вĕри мар кăмаки, анчах пăртак кушăрхасан та йĕпепе çӳрен мар.

Жанна каллех мамак çумне пырса сĕртĕнчĕ.

Наçтаççи мамак, пĕчĕкçĕ хĕрача тем каласшаннине туйса, ăна куçран тинкерет.

Жанна, калама хăю çитерейменсĕр, пуçне çĕрелле чикет.

—Ну, мĕн-ха, кукаму мĕн ĕçлет-ха, килтех-и-ха? — ыйтать Наçтаççи мамак.

—Килтех, — кăшт çеç илтмелле хуравлать Жанна.

Вара каллех тем тăршшĕ шăплăх. Жаннăн

хурлăхлă именчĕк сăн-пичĕ, Жаннăн чĕмсĕр куçĕсем тăрăхах туять Наçтаççи мамак — ыйтмалла марччĕ унăн хĕр ачаран кукамăшĕ пирки.

—Мамак, — тет Жанна сасартăках, чăтса тăраймасăр, шăппăн-шăппăн, — ман канфет çиес килет.

Мамак сĕтел патне пырать те чашăкри майăр пек виçĕ-тăватă çавра симĕсрех канфет илсе парать Жаннăна.

Жаннăн майăр пек çаврисене мар, çĕркаçхине, хĕрлĕ-кăвак хутпа чĕркенисене çиес килет — хăп-хăмăрскерсем çиелтен пăхма, ăшĕнче вара сарăрах темле. Çĕркаç Наçтаççи мамак патне килсессĕн, темиçе те паче вăл Жаннăна ун йышшисене, Жаннăна вĕсене пурне те çисе ямарĕ мамак патĕнче, пĕр-иккĕшне кĕсйине чиксе хучĕ, кайран, киле çитсен çимешкĕн тесе. Анчах киле таврăнсан кукамăшĕ унăн йĕпеннĕ жакеткине типме тесе кăмака çине сарса хунă та, кĕçӳери канфечĕсем ирччен йăлтах ирĕлсе кайнă, кĕссӳе тĕпĕнчи çуӳпĕсемпе хутăшса хытса ларнă. Çавăнпа та паян

ир-ирех килсе пăхнăччĕ вăл пĕрре Наçтаççи мамак патне, анчах мамакăн килĕ хупăччĕ, унтан, тепĕртакран, татах тепĕр хут чупса килсе кайнăччĕ Жанна, анчах мамак каллех килте çукчĕ, вĕшле Кампурĕ кăна хам-хам туса тăратчĕ пӳрт хыçĕнче, анчах Наçтаççи мамак нихаçан та ниçта та хыççăн ертсе çӳремест Кампура, яланах сăнчăрта ларать Кампур, хăй Жанна пекех пĕчĕккĕ кăна пулин те.

Çук, пачах та çаврисене çиес килмест Жаннăн, анчах пач çимесен те лайăх мар, хутлисене ыйтма та хăрать Жанна, çавăнпа та пĕр канфетне çăвара хыпать те катăртаттара пуçлать — ăна ирĕлессе кĕтсе тăриччен луччĕ часрах чăмласа çисе ярас та, вара кайран, тен, хутлисене те ыйтма пуле. Анчах тутлă мар кусем, хытă ытлашши тата пылак, шăла тивеççĕ, çăванпа та кĕсӳесене чиксен те мĕн тавасха Жаннăн вĕсемпе, вăл вĕсене пĕрех çиес çук, килте те, чăланта пурччĕ ун йышши çаврисем, пачах та вĕсене çиме килмен Жанна Наçтаççи мамак патне.

Жанна мамака çакна йăлтах каласа ăнлантарас тесе çăвар уçма хатĕрленчĕ кăна, мамак ăна:

— Тутлă-и? — терĕ те вăл кулса, сĕтел çинчен тата темиçе канфет илсе пачĕ.

—Кийлĕ май, — пуçне сулларĕ Жанна.

—Чик кĕсйусене, кайран çиен, — терĕ ăна мамак, вара кĕсйисене тултарса ячĕ,

Наçтаççи мамак чӳречесенчен пăхкаларĕ те, çывăрмалла пуль текелесе, дивам çине темле тумтир сарса хучĕ.

— Кунта çывăратн-и паян? — ыйтрĕ вăл унтан Жаннăран.

Жаннăн пачах та кунта çывăрас килмест кĕçĕр, анчах киле кайсан хутлă канфет çиесси пулмасть, çавăнпа та вăл майĕпен, тăсараххăн:

— Çи-вă-йа-ап,— терĕ.

Унтан вĕсем диван çине вырнаçса выртрĕç, Жаннăна Наçтаççи мамак куян çурисем çинчен юмах каласа паче, юмахне вĕçне çити итлесе те пĕтереймерĕ пĕчĕк Жанна, çывăрса кайрĕ.

Кукамăшĕн çилленчĕк сассипе варанса кайрĕ Жанна, Наçтаççи мамакпа вăрсать кукамăшĕ, мĕн кăна каламасть пулĕ вăл ăна:

— Эс юри астаратан ачана, юри пуҫне ҫаврӑтӑн, сивӗтетӗн манран. Ара, эп япӑх-ҫке, ара, ӗҫеп-ҫке, таса мар, тирпейсӗр, эсӗр вара лайӑхскерсем шутсӑр, эсӗр пуян, сирӗн пурте пур, ӗҫместӗр эсӗр манашкал, тухатмӑш карчӑкки, лӑпӑр-лапӑр!..

— Ара, эс чипер калаҫ-ха, мӗн тесе астарас ман пӗчӗк ачана, мӗн тесе сивӗтес, — теме кӑна пултарать хирӗҫ Наҫтаҫҫи мамак, урӑх ним калама та сӑмах тупаймасть.

— Тар, ачам, тӑр, атя киле каятпӑр ҫак усал карчӑк патӗнче мӗн туса вырттатӑн, ара? Тухатмӑш карчӑкки вӗт вӑл, усалскер, — Жаннӑна алӑ ҫине ҫӗклет кукамӑшӗ.

— Усал май-иҫ, — тет те Жанна шӑппӑн, вӑрани-вӑранми мӑкарса ярать.

Кукамӑшӗ ӑна тумлантарать те йӑтса тухса каять.

Наҫтаҫҫи мамак ним чӗнми пӑхса тӑрса юлать.

Урама тухсан, кукамӑшӗ хӗрачана питӗнчен чуптуса илет те:

— Мами килнӗ, Жанна, мами килнӗ санӑн, —

тесе ачашла-ачашла лăскама пуçлать.

Мамине астуманпа пĕрех Жанна. Пĕчĕккĕ чухнехине, паллах, асра тытма пултараймасть вăл ниепле те, кайран вара, астăва пуçласан, амăшĕ киле килни пĕр-ре те пулман. Кукамăшне апой тесе пурăнчĕ малтан вăл, анчах кайран кукамăшĕ ăна апой пирĕн аякра, хулара пурăнать, çавăнпа та ăна мами тесе чĕнмелле, эпĕ вара саншăн кукам пулатăп тесе тăнлантарчĕ. Çавăн хыççăн вара сайра хутра пĕрре Жаннăн çав тери амăшне курас килсе каятчĕ те:

— Кукам, ман апойне куйас килет, — тетчĕ вăл.

— Апой мар, мами, — тетчĕ те кукамăшĕ мăнукне хĕрĕн санӳкерчĕкĕсене кăтартма тытăнатчĕ: — Ак кунта вăт мами сан пек пĕчĕк хĕрача кăна, ак кунта вара мами шкула каять ĕнтĕ, иккĕмĕшнеччĕ-и е виççĕмĕшне-и, ак кунта мами шкул пĕтерет, куратăн-и, епле шурă кĕпепе вăл сăнӳкерчек çинче, ку сăнӳкерчĕкне тата хулара ӳке-рĕннĕ, юлташĕсемпе пĕрле...

Пурте кĕнĕ-кĕмен вĕсем патне сап-сарă

теттеллĕ инке чупса пычĕ те Жаннăна ыталаса илсе макăрса ячĕ. Пачах та сăнӳкерчек çинчи пек мар, тĕлĕнсе шухăшларĕ Жанна. Нумай-нумай хутчен курма ĕмĕт-леннĕ, курассишĕн чăтма çук каçăхса тунсăхланă апой, мами ĕнтĕ ку, анчах ун ытамĕнче Жаннăна темле сивĕ те ют пулса кайрĕ.

— Жанна, Жанночка, хĕрĕм, мĕнле пурăнатăн эсĕ, лайăхах-и? — хурлăхлăн та савăнăçлăн сăмахлать мами.

— Эпĕ сана валли пушмак илсе килтĕм, чечеклĕ тутăр илсе килтĕм эпĕ сан валли. Ну-ка, тăхăнса пăхăтпăр пушмакне, ăçта-ха сан тяпписем, ну-ка?..

Жанна шăппăн, илтес тесен те илтме çукла, тĕрĕсленĕ евĕр хăйĕн сассине:

— А-пой, а-пой, — тет икĕ хутчен.

Амăшĕ илтмест ун сассине, анчах вĕсм çине куç илмесĕр пăхса тăракан кукамăшĕ тута хусканăвĕсем тăрăхах ăнкарса илет те, Жанна патне ıырса:

— Апой мар тесе каларăм-иç сана, апой мар, мами тесе кала, Жанна, Жанночка, — тет, хăй хĕрĕ

çине, Жаннăн мами çине пăхать. — Жанна, Жанночка, мами сана валли пушмак илсе килнĕ, чечеклĕ тутăр илсе килнĕ мами сан валли. Атя, атя, тăхăнса пăхăтпăр пушмакне, пар-ха тяппусене. Кукамăшĕ Жаннăн çăм чăлхисене хывать те хуларан мами илсе килнĕ вĕр-çĕнĕ пушмак тăхăнтартать. Унтан. ат-тя, ать текелесе, Жаннăна çĕнĕ пушмакпала урай тăрăх сиктерет.

Жанна каллех темшĕн макăрса ярать. Мамипе кукамăшĕ ăна лăплантарма пикенеççĕ, анчах Жанна тата хытăрах макăрать.

— Çывăрасшăн пуль, анне, — тет Жаннăн мами кукамне, вара ăна вырăн сарса параççĕ.

— Эпир унпа кăмака çине хăпарса выртакан ытларах чухне, эс ĕнтĕ Жанночкăпа пĕрле выртатăн пуль кĕçĕр, — тет кукамĕ мамине.

Кукамăшĕ Жаннăна нихаçан та Жанночка тесе курман, никамран та илтмен Жанна унашкал сăмаха, паян пĕрремĕш хут илтрĕ — апойĕнчен, вара те апойĕ çавашкал чĕннĕрен, кукамăшĕ те, ав, Жанночка та Жанночка тет Жаннăна, анчах Жаннăна пĕрре те килĕшмест ун пек калани,

Жанна тесе çеç калаттарас килет Жанăн хăйне, хĕрĕм, ачам тенине те илтес килмест унăн, çавăнпа макăрать те вăл, анчах кукамăшне мĕнле каласа ăнлантарма пултарĕ-ха, каласа ăнлантарма пĕчĕккĕ-ха вăл.

Жаннăн пачах та çывăрасси килмест, унăн мами çине пăхас та пăхас килет. Мами çаплах сĕтел хушшинче, кукампа юнашар ларать. Ют пулин те, темле ун çумнерех пулас килет Жаннăн.

Мами те, кукампа калаçса лараканскер, çине-çине Жанночка çине пăхса илет.

Жанна тĕлĕре пуçланăччĕ ĕнтĕ, мами унпа юнашар кĕрсе выртать, Жанночкăна хăй çумне пăчăртать те шăппăн, çепĕççĕн, юратуллăн:

— Жанна, Жанночка, — тет вĕçĕ-хĕррисĕр. Тата темскер калать вăл Жаннăна, анчах хĕрача тăна кĕреймест.

Ахăртнех, мами ăна çывăрать тесе шутлать ĕнтĕ, анчах Жанна пачах та çывăрмасть: ăçтан çывăрма пултартăр-ха вăл çак самантра, тахçантанпах кĕтсе пурăннă апой çумра чух. Анчах мĕнле каламалла-ха апойне хăй çывăрманнине,

тата мен калаçĕ-ха вăл унпа, тата шиклĕ темле кăштах, шиклĕ те сивĕ пăртак.

Хăй те сисмерĕ Жанна,  сасартăк мамине:

—А-пой, а-пой, — терĕ. Темле нихăçан та шутламаннăн çак сăмахсене калама, темле тĕлĕкри пек.

—Эс çывăрмастăн-и, хĕрĕм, Жанночка, — тутипе ун куçĕсене, çамкине, çӳçне перĕнчĕ мами.

— А-пой, эс хутлă канфет илсе килмейĕн-и-и-и... — чĕтренчĕк сасăпа ыйтать маминчен Жанна. — Ман  питĕ-питĕ хутлă канфет çиес килет.

— Илсе килмесĕр, ара, — тет мами савăнса та тĕлĕнсе. — Çиетĕн-и, илсе килсе парас-и?

—Эп хамах тăйатăп, апой, — тет Жанна-Жанночка.

Вара вĕсем тăрса канфет çиеççĕ. Канфечĕсем пĕр тĕслĕ çеç мар, темиçе тĕслĕ, тути те вĕсен тĕрлĕрен, анчах пурте тутлăскерсем.

—Хучĕсене ан пăйах эс, апой, — тет Жанна мамине. — Эп вĕсене пухатăп.

—Мĕн тума вĕсем сана? — тĕлĕнсе ыйтать амăшĕ.

—Лавккайа кӑчӑй-кӑчӑй ҫавйакисем кӑна, вӑт ҫавсене хутпала чӗйкетӗп те, манӑн каллех хутлӑ канфет пулӗ, — ӑнлантарать Жанна.

— Эпӗ сана хуларан илсе килсе парӑп татах хутлисене, эс ан кулян, эп пӗлмен те эс хутлисене ҫав тери юратнине, — тет мами. — Юрать-и, эпӗ сана татах илсе килсе паратӑп, эс мана ан ман кӑна, юрать-и, Жанна, Жанночка?

—Ӑ-хӑ, — пуҫне сӗлтет Жанна. Тата тепӗр самантран, хаюсӑррӑн, аран-арӑн: — Апой, эп сана апой теп, эха?

— Эй, ман пӗчӗкскерӗм, — чӑпӑрт чуптуса илет ӑна мами. — Ман пӗчӗк-пӗчӗк Жанночкам, чиперскерӗм, лайӑхскейӗм.

— Апой, Жанна-Жанночка ан те эс мана, аха?

—А-ха, — тет мами.

Унтан пӗр хушӑ шӑп вӗсем: мами пусне чикнӗ те тем шухӑшлать, Жанна канфен хучӗсене, сӗтел ҫине хурса, чӗрнипеле якатать.

—Апой, — тет, ларсан-ларсан, сасартӑк Жанна, — апой, атя манпа, аха?

—Ӑҫта? — ӑнланаймасӑр ыйтать мами.

—Мамак патне, — тет Жанна. Мамак тесен, картах сиксе илет мамин чунĕ. Кам вăл Жаннăн мамакĕ, мĕнлескер, ырă-и, усал-и, нихçан та курман, илтмен ун çинчен Жаннăн мами. Тата вăл, Жаннăн мамакĕ, пĕлмест те çак çĕр çинче Жанна пурри çинчен. Жанна вĕт, ялти пек каласан, вĕлтрен ачи, хуларан тупса килсе янăскер. Ашшĕ те, ачасен пур паппи, çук унăн. Хăйĕн паппи çуккине туятьчĕ-ха Жанна, анчах мамак çукки çинчен нихăçан та шутламан вăл. Мĕнле çук пултăр-ха унăн мамак, пур-çке, кӳршĕлле пурăнакан Наçтаççи мамак.

Ним калама аптрать мами пĕр хушă, унтан тин тупать мĕн каламаллине.

— Çыврать ĕнтĕ халь мамак, вăратма аван мар.

— Çывăрмасть, — тет Жанна. — Мана кĕтсе ларать вăл. Атя кайса канфет çитеретпĕр ăна, апой.

— Мамак, — тет Жанна, — мамак, эпир сана канфет çитерме килтĕмĕр, — вара пĕр ывăç хутлă канфет кăларса тыттарать.

— Ай-уй, ун чухлĕ кирлĕ марччĕ, — тет

Наçтаççи мамак, савăнса.

— Пирĕн килте тата нумай. Апой илсе килнĕ хуларан, — тет Жанна.

— Эп шутламан та ялта хутлă канфет çук тесе, ман асра та пулман. Юрать хăть илмешкĕн ăс çитернĕ, — темле пăртак айăплăраххăн сăмах хушать Жаннăн мами

— Ара, унччен яланах пурччĕ та халь вăл, сахăр çухалчĕ те, канфетне те илсе пĕтереççĕ туххăмрах, — тет Наçтаççи мамак.

Вĕсем калаçнă хушăра Жанна чӳрече патне пырать те мамакăн пăта синче çакăнса тăракан куçлăхне илсе тăхăнса ярать, пукан çинче выртакан пĕчĕкрех хаçатне алла тытса вуланă пекки тăвать.

—Жанночкăна пĕрле илсе каяс тесе шутлатăп та, тăвăртарах çав халлĕхс, майĕ çукрах. Тăваттăн пурăнатпăр пӳлĕмре. Кĕркуннесемпеле хама уйрăм пĕр пӳлĕм илмелле пек те-ха, — каласа парать мами мамака.

— А-пой, ап-пой, ан кулян эс маншăн, ан хурлан, эпир кунта лайăхах пурăнат-пăр

кукампала, çапла вĕт, мамак? — тет Жанна кĕтмен çĕртен мамине. — Манса ан кай çеç эс мана, ман сана курас килнĕ чухне кил çеç мана курмашкăн, тата кăшт кăна хутлă канфет илсе кил пĕрле, аха, атту лавккара хутлă канфет çук вĕт пирĕн, э, мамак? Хушăран ман питĕ-питĕ хутлă канфет çиес килет, апой, тата сана курас килет.

*Чиндыков, Б. Хутлă канфет: [калав] / Б. Чиндыков // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 446-449.*